Район 65 çул тултарчĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

16-17 (7656-7657) №№ ✻ Шăмат кун, 2009 çулхи февралĕн (нарăс) 28-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Пире саламлаççĕ

Хисеплĕ Юрий Александрович!

Сире тата Муркаш районĕнче пурăнакансене пурне те района йĕркеленĕренпе 65 çул çитнĕ ятпа чĕререн саламлатăп. Çак куна Муркашсем ĕç ритмĕнче, ырă улшăнусемпе кĕтсе илеççĕ. Сирĕн тĕп пуянлăх – тăван çĕре тасарах, тирпей-илемлĕрех, илĕртӳллĕрех тăвас тесе тăрăшакан ĕçчен те пуçаруллă, хастар çынсем.

Юлашки çулсенче район центрĕн, ялсен сăн-сăпачĕ чылай улшăнчĕ. Малашне те эсир пĕр вырăнта чарăнса тăрас марринe, чи хăюллă плансене ăнăçлă пурнăçа кĕртессе шанатăп.

Сире тата Муркаш районĕн мĕн пур çыннисене çирĕп сывлăх, ырă ĕçсенче анăçу, телей тата ырă тивлет сунатăп.

Н.В. ФЕДОРОВ, Чăваш Республикин Президенчĕ.

Муркаш районĕн хисеплĕ çыннисем!

Района йĕркеленĕренпе 65 çул çитнĕ ятпа сире чĕререн саламлатăп.

Муркаш çĕрĕнчен Чăваш Еншĕн çеç мар, Раççейшĕн те паллă çынсем сахал мар тухнă: Николай Никольский – чăвашсен пĕрремĕш профессорĕ, «Хыпар» хаçат никĕслевçи, Валентина Егорова – XXV Олимп вăйăисен чемпионки, Совет Союзĕн Геройĕсем пиллĕкĕн, Раççей Геройĕсем Евгений Борисовпа Николай Смирнов т. ыт. те.

Район çулленех производствăра, предпринимательствăра, культурăра тата спортра палăрăмлă кăтартусем тăвать. Ялсен сăн-сăпачĕ улшăнса пырать, çĕнĕ çулсем тата хăтлă çурт-йĕр тăваççĕ.

Сире çирĕп сывлăх, ăнăçу, телей тата юрату, района тата республикăна аталантарас енĕпе тухăçлă ĕç сунатăп.

Н.М. БУДАРИН, РФ Патшалăх Думин депутачĕ, Раççей Геройĕ, летчик-космонавт.

Муркаш районĕн хисеплĕ çыннисемпе кунта çуралнисем!

Сире района йĕркеленĕренпе 65 çул çитнĕ ятпа саламлатпăр!

Муркашсем тăван ене пĕтĕм Раççей шайĕнче чапа кăларма пултарнă хăйсен паллă ентешĕсемпе чăннипех те мухтанма пултараççĕ. Вĕсем хушшинче – чăвашсен пĕрремĕш профессорĕ, чăвашсен «Хыпар» хаçатне йĕркелекенĕ Николай Васильевич Никольский, Социализмла Ĕç Геройĕ Евтихий Андреевич Андреев, Раççей Геройĕ Евгений Германович Борисов, наукăпа культура тата искусство ĕçченĕсем, паллă аграрисем, писательсемпе таврапĕлӳçĕсем, педагогсем, халăх хуçалăхĕн пур сферин ĕçченĕсем.

Çак куна эсир Чăваш Республикинчи Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕнче паллă туни те палăрăмлă самант. Хастар ĕç ял хуçалăхĕнче кăна мар, ытти отрасльсенче те курăмлă. 2008 çулта районта ял хуçалăх тата промышленность продукцине туса илессин, çурт-йĕр тăвассин калăпăшĕсем ӳснĕ, çĕнĕ çулсем, инженерипе социаллă инфраструктура объекчĕсем, «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексне хута янă.

Хаклă туссем, сире тăван районăн, Чăваш Республикин тата пĕрлĕхлĕ, вăйлă Раççейăн тивлетне малашне те ӳстерсе пырассинче çирĕп сывлăх, телей тата ăнăçу сунатпăр!

«Единая Россия» партин Чăваш регион уйрăмĕ.

Муркаш районĕн хисеплĕ ĕçченĕсем!

Района йĕркеленĕренпе 65 çул çитнĕ май чи ăшă салам йышăнăр.

65 çул историшĕн вăрăм тапхăрах мар, апла пулин те унта районăн пысăк ĕç çулĕ çырăнса юлнă. Вырăнти самоуправление пурнăçа кĕртни чи малтанах вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене – муниципаллă йĕркеленӳ территорийĕнче пурăнакансен кулленхи пурнăçĕпе çыхăннă ыйтусене – татса пама майсем туса панипе çыхăннă. Сирĕн çитĕнӳсене курса савăнатпăр.

Пур ăру çыннисем те лартнă тĕллев патне ăнтăлнипе район хăйĕн историллĕ хăйне евĕрлĕхне сыхласа хăварнă, малашлăха шанчăклăн пăхать.

Савăнăçлă уяв кунĕнче республикăри муниципаллă йĕркеленӳсен канашĕ сире телей, ĕç-хĕлĕн пур сферисенче те татах пысăк çитĕнӳсем, мухтавлă традицисене малалла аталантарса пыма, пур плансемпе шухăш-тĕллевсене пурнăçа кĕртме ăнăçу сунать.

Çак чаплă районта пурăнакан çынсен кашнин килĕнче çураçупа тăнăçлăх хуçаланччăр.

В.П. ФАДЕЕВ, Чăваш Республикинчи муниципаллă йĕркеленӳсен канашĕн председателĕ.

Хисеплĕ Юрий Александрович, пирĕн кӳршĕсем – Муркаш районĕн çыннисем!

Сире пурсăра та Муркаш районне йĕркеленĕренпе 65 çул çитнĕ ятпа чĕререн тата ăшшăн саламлатпăр! Пĕлетпĕр, Муркаш районĕнче пултаруллă та ĕçчен, йывăрлăхсем умĕнче пуçа усма хăнăхман çынсем пурăнаççĕ. Çавăнпа та вĕсен экономикăри те, социаллă сферăри те ӳсĕмĕсем курăмлă. Çаксем пуш сăмахсем мар. Кӳршĕ республикăсенчи пирĕн кӳршĕ районсем хушшинчи туслă çыхăнусем йĕркеленни пĕрремĕш çул мар. Муркашсен ӳсĕмĕсем пире те малашлăха шанчăкпа пăхма хавхалантараççĕ.

Паянхи çăмăл мар, кăткăс вăхăтра та район ĕçченĕсем пур енĕпе те ӳсĕмлĕ ĕçлесе пыраççĕ. Çакăнта района, предприятисемпе организацисене ертсе пыракансен, районти кашни ĕçченĕн тӳпи.

Хаклă та хисеплĕ тусăмăрсем. Сирĕн пархатарлă ĕçĕршĕн чĕререн тав тума, телей, ăнăçусем, çирĕп сывлăх, çемйĕрсенче тăнăçлăх сунма ирĕк парсамăр.

Хисеплесе тата пур енлĕ ăнăçусем сунса Мари Республикин Горномарийски районĕн пуçлăхĕ Л.З. КУБЕКОВ.

Хисеплĕ Юрий Александрович!

Сире тата районти мĕн пур çынсене Муркаш районне йĕркеленĕренпе 65 çул çитнĕ ятпа саламлатпăр. Сирĕн районта ĕçчен, çĕре, хăйсен ĕçне парăннă, ăшă кăмăллă çынсем пурăнаççĕ. Вĕсем тăрăшнипе районăн экономикăпа социаллă, культурăпа ăс-хакăл аталанăвĕн задачисене ăнăçлă татса параççĕ. Сирĕн район Чăваш Енре экономикăпа социаллă аталану енĕпе малтисенчен пĕри пулса тăчĕ.

Пирĕнтен чи ăшă салам сăмахĕсене йышăнсамăр. Пурсăра та çирĕп сывлăх, тивлет тата малашнехи ĕçсенче те ăнăçусем сунатпăр. Район малашне те аталану çулĕпе çирĕп уттăр.

Ф.Я. СИНАГАТУЛЛИН, Пушкăрт Республикин муниципаллă Шаран районĕн администрацийĕн пуçлăхĕ.

Муркаш районĕн хисеплĕ çыннисем!

Муркашсен ентешлĕхĕн канашĕ сире паллă кунпа – района йĕркеленĕренпе 65 çул çитнипе чĕререн саламлать.

Унтанпа сахал мар шыв-шур юхса кайрĕ, района кĕрекен территорисемпе вĕсен чиккисем, ялсем те улшăнчĕç. Утса тухнă çул-йĕрĕн тапхăрĕсем паян уйрăмах уçăмлă та витĕмлĕ палăраççĕ. Ырă традицисем, тăван çĕре юратни, хăвăр районпа мăнаçланни сире ырă ĕçсем тума хавхалантарса пыраççĕ.

Пирĕн çĕр çинче паллă политиксем, ăслăлăх, культура, литература тата искусство çыннисем сахал мар çуралса ӳснĕ.

Хальхи ансат мар вăхăтра та район çыннисем çине тăрса ĕçлеççĕ, аслă ăру çыннисен традицийĕсене çамрăксем тивĕçлипе малалла тăсаççĕ.

Мĕн палăртнине пурнăçа кĕртме сире малашне те ăнăçу, ырлăх-сывлăх, телей, оптимизм сунатпăр.

Муркашсен ентешлĕхĕн канашĕ.

Малашне те район аталанăвĕшĕн пĕрлех вăй хурар

Районăмăр 65 çул тултарчĕ. Çавна май паян Шупашкарта К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш Патшалăх академи драма театрĕнче районти ĕç коллективĕсен савăнăçлă пухăвĕ иртет. Унта юлашки 5 çулхи ĕçе пĕтĕмлетеççĕ. Производствăра малта пыракансене чысларççĕ. Мĕнле ӳсĕмсемпе кĕтсе илеççĕ район çыннисем çак паллă куна? Çакăн çинчен каласа пама ыйтрăм эпĕ район пуçлăхĕнчен Ю.А. ИВАНОВРАН.

Калаçава Юрий Александрович салам сăмахĕнчен пуçлама кăмăл турĕ.

– Хисеплĕ ентешсем! Сире пурне те хамăрăн тăван районăмăр 65 çул тултарнă ятпа пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп. 65 çул пирĕн районшăн кĕске тапхăр мар. Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче йĕркеленнĕ районăмăр кирлĕ пек аталанса пытăр тесе кашни ăру çынни хăйĕнчен килнине йăлтах тунă. Муркаш районĕ пирĕн тăван республика аталанăвĕн тата çирĕпленсе пынин историне сахал мар ырă ĕçсемпе кĕрсе юлчĕ. Вăрçă çулĕсенче районта пурăнакансем кам пăшалпа, кам ырми-канми ĕçпе Çĕнтерĕве çывхартрĕ. Унтан вăрçăпа юхăннă халăх хуçалăхне ура çине тăратассишĕн тимлерĕç. Паян та эсир район аталанăвĕшĕн хăвăртан килнине йăлтах тăватăр. Эсир тăрăшуллă пулнипе ĕнтĕ районăмăр республикăра ырă ятлисен шутĕнче. Тавах сире çакăншăн. Малашне те мĕн тунипе лăпланмасăр, пĕр тĕллевлĕн хамăр пуласлăхшăн, тăван енĕмĕр чечекленĕвĕшĕн тăрăшасчĕ.

Пурне те çирĕп сывлăх, çĕнĕ çитĕнӳсем тума ăнăçу, çемьере килĕшӳпе тату пурнăç, юрату сунатăп. Шухăшлани пурнăçланса, ĕмĕтленни çитсе пытăр.

– Калаçава ял хуçалăх ĕçченĕсенчен пуçлар-ха. Çăмăл мар пулин те, район аталанăвĕшĕн хăйсенчен килнине йăлтах тăваççĕ вĕсем.

– Район ял хуçалăх районĕ пулнăран унăн аталанăвĕ çак отрасль епле шайра пулнипе тӳрремĕнех çыхăннă. 2003 çулхипе танлаштарсан, ял хуçалăх продукцине иртнĕ çул паянхи хаксемпе 37 процент ытларах туса илтĕмĕр. Пĕлтĕр пур йышши хуçалăхсенче тырă 30 пин тонна, çĕр улми 56 пин тонна туса илтĕмĕр. Вăтам тухăç 22,4 тата 181,6 центнерпа танлашрĕ. Чи пысăк тухăç çак хуçалăхсен пулчĕ: «Герой» – тырă тухăçĕ – 33,5 центнер, çĕр улми – 228 центнер (ертӳçи – Р.Н. Тимофеев, агрономĕ – З.Я. Макарова), Ильич яч. хис. – 29,7 центнер тата 226 центнер (ертӳçи – И.В. Николаев, агрономĕ – Ф.А. Егоров), Чкалов яч. хис. –тырă тухăçĕ 29,7 центнер (ертӳçи – П.Г. Ефимов), «Оринино» - çĕр улми тухăçĕ 236 центнер (ертӳçи – Ю.Н. Шишокин, агрономĕ – И.В. Блинова). Ял хуçалăх продукчĕсене туса илессипе, çĕнĕ технологие пурнăçа кĕртессипе «Ударник» (ертӳçи – П.П. Давыдов), «Свобода» (ертӳçи – К.Е. Сретинский), Суворов яч. хис. (ертӳçи – В. С. Андреев) хуçалăхсем çулсеренех ăнăçлă ĕçлесе пыраççĕ.

Ял хуçалăх продукцийĕнчен 66 проценчĕ – выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ. Республикăри районсем хушшинче сĕт туса илессипе Муркашсем 1 вырăн йышăнатпăр, аш туса илессипе – 3 вырăн. Вăтамран пĕр ĕне пуçне районĕпе 3770 килограмм сĕт суса илтĕмĕр. 11 доярка ку кăтартăва 5 пин килограмран ирттерчĕç, тепĕр 44 доярка – 4 пинпе 5 пинлĕ чикĕ хушшинче.

Паян «Герой» хуçалăхри Р.М. Соловьевапа А.Ф. Иванова сурăх пăхакансене те ырăпа асăнса хăварас килет. Иртнĕ çул вĕсем кашни сурăхран 4,3 килограмм çăм касрĕç, кашни 100 сурăхран 105 путек илчĕç.

«Муркашри чăх-чĕп фабрики» (ертӳçи – Н.Г. Ванеркин) çăмарта туса илессине çулсеренех ӳстерсе пырать. Иртнĕ çул кунта кашни чăхран 324 çăмарта илчĕç. Çакă йăлтах çĕнĕ технологие пурнăçа кĕртнипе тата кунта ĕçлекенсене тивĕçлĕ условисем туса панипе тачă çыхăннă.

Çакна та палăртса хăвармалла. Патшалăх çулсеренех ăратлă выльăх-чĕрлĕх тытма, элитăллă вăрлăх туянма, çĕр пулăхлăхне ӳстерме хуçалăхсене укçа-тенкĕ парса пулăшать. Пĕлтĕр çак тĕллевпе района федераллă бюджетран 54,7 млн. тенкĕ, республика бюджетĕнчен 22,9 млн. тенкĕ килчĕ.

Ял хуçалăх продукцине туса илнĕ çĕрте килти хушма хуçалăхсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Пĕтĕм çĕр улмин 68 процентне, пахча çимĕçĕн 95 процентне, сĕтĕн 79 процентне, ашăн 72 процентне шăпах вĕсенче туса илеççĕ. 2006-2008 çулсенче пĕчĕк формăллă хуçалăхсене аталанма пулăшас тĕллевпе 2311 уйрăм хушма хуçалăха 370,0 млн. тенкĕ кредитсем панă.

– Районти промышленность предприятийĕсем те çулсеренех ăнăçлă аталанса пыраççĕ. Уяв кунĕнче вĕсем çинчен мĕн каланă пулăттăр?

– Чăннипех те, промышленноçра та курăмлă утăмсем тăватпăр. Юлашки 5 çулта кашни çул вăтамран 451, 0 млн. тенкĕлĕх продукци кăларнă. Урăхла каласан, 2003 çулта 100 млн. тенкĕлĕх кăларнă пулсан промышленность продукцине, 2008 çулта 833 млн. тенкĕлĕх туса кăларнă. Çакă вăл промышленность отраслĕсем (пĕчĕк тата вăтам предприятисем те кĕреççĕ унта) йĕркеллĕ аталаса пыни, вĕсенче хăйсен ĕçне пĕлекен пултаруллă ертӳçĕсемпе ăста специалистсем ĕçлени çинчен калать. «Сеспель» акционерсен хупă обществи (ертӳçи – В.А. Бакшаев), 2003 çулхипе танлаштарсан, хăйĕн кăтартăвне 16 хут ӳстерчĕ, иртнĕ çул – 697 млн. тенкĕлĕх.

«Муркашри сĕт-çу завочĕ» акционерсен уçă обществи те (ертӳçи – В.А. Калинин) мĕн йĕркеленнĕренпех çирĕп ура çинче тăракан предприятисен шутĕнче, татти-сыписĕр сĕт продукчĕсемпе тивĕçтерсех тăрать. 2003 çулхипе танлаштарсан, продукци туса кăларасси кунта 2,3 хут чухлĕ ӳсрĕ.

«Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă общество та (ертӳçи – Л.Г. Ильгечкин) ăнăçлă аталанакан предприяти. Енчен те 2003 çулта кунта 700 тонна çăкăрпа булка изделийĕсене туса кăларнă пулсан, пĕлтĕр – 1000 тонна. Завод технологĕсем çулсеренех продукци ассортиментне çĕнетессипе, нумайлатассипе, вĕсен пахалăхне лайăхлатассипе тимлеççĕ. Паян кунта 140 тĕрлĕ продукци туса кăлараççĕ. Çулсерен 32,0 млн. тенкĕлĕх.

«Муркашри кирпĕч завочĕ» акционерсен уçă общести те (ертӳçи – В.П. Тукмаков) çулсеренех ытларах та ытларах продукци кăларса сутать. 5 çул каяллахинчен 2 хут ытларах хăпартрĕç вĕсем хăйсен кăтартăвне: 13,6 млн. штука çитерчĕç.

– Халăхăн пурнăç шайĕ лайăхланса пыни суту-илӳ предприятийĕсен кăтартăвĕсенчен те лайăх курăнать. Районти потребкооперацисем ĕçченĕсем çак ĕçе хăйсем те тӳрремĕнех хутшăнаççĕ.

– Район экономикинче потребительсен рынкĕ, чăннипех те, курăмлă вырăн йышăнать. Суту -илӳ, обществăлла апатлану тата сервис аталанса пыраççĕ çеç мар, вĕсем паянхи кун ыйтăвĕсене пĕтĕмпех тивĕçтереççĕ. Ваккăн сутмалли тавар çаврăнăшĕ иртнĕ çул 609,0 млн. тенкĕпе танлашрĕ е 2003 çулхинчен 2,6 хут пысăкрах кăтарту ку. Таварçаврăнăшĕнче потребкоопераци предприятийĕсем тĕп вырăн йышăнаççĕ. Муркаш тата Мăн Çĕнтĕр райповĕсен ертӳçисем Б.В. Андреевпа Л.П. Майкова нумай çул ĕнтĕ суту-илӳ культурине хăпартассипе, халăхăн ыйтăвĕсене туллинрех тивĕçтерессипе тата пулăшусен пахалăхне ӳстерессипе тимлеççĕ.

Район аталанăвĕнче пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăн тӳпи те çулсеренех ӳссе пырать. Çĕнĕ технологисене пурнăçа кĕртнĕçемĕн туса илекен продукцин, ĕçсен, пулăшусен калăпăшĕ те, ассортименчĕ те ӳссе пырать, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем хушăнса пыраççĕ. Иртнĕ çул кăна 18 суту-илӳ точки уçалчĕ.

– Халăха тĕрлĕрен пулăшу парассипе те район япăх мар ĕçлесе пырать.

– Тавар рынкĕпе танах аталанса пырать халăха тĕрлĕрен пулăшу парасси. Хальхи вăхăтра пĕтĕмпе 90,3 млн. тенкĕлĕх тĕрлĕрен тӳлевлĕ пулăшусем панă. Ку вăл 2003 çулхинчен 1,5 хут нумайрах. Ку сферăра уйрăмах пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă предприятисем паракан пулăшусем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Нумай çул ĕнтĕ Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха Н.А. Шишкин ертсе пырать, Мăн Çĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха – Ю.Л. Петров.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).